

# Вăхăт ҫĕнĕ ятсем ыйтать

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет.
Авторĕсем – Светлана Чикмякова тата Оксана Семенова



## Уйрăлу такмакĕ

КАЛАВ

Пурнăç урапи яланах хăв шухăшланă пек кусмасть. Чăрмавсем те тупăнаççĕ – тума пуçланă ĕçе те вĕçне çитерейместĕн. Кам айăпĕпе пулать – калама йывăр. Пĕтĕмпех хамăртан килет: ĕç тăвасси те, калаçасси те, хамăра хамăр çын умĕнче тытасси те.

«Яш чух аллă, хĕр чух хĕрĕх», – тенĕ ваттисем. Çамрăк чух юратнă çынпах пĕрлешсе пурнăç çавăрас килет, анчах шухăш та, ĕмĕт те пурнăçланаймасть. Пурнăçа пĕтĕмпех хамăр «çыратпăр», ăна тума атте-аннене, тăван-пĕтене, ял-йыша хутшăнтаратпăр.

Çаплах шутланă Наçтуç аппа. Çемье çавăрса, ача-пăча ӳстерсе, ура çине тăратса ватлăхра ырă курса пурăнма ĕмĕтленнĕ. Анчах пурнăç урăхла çулпа илсе кайнă. Наçтуç аппана ют ялти Иван килĕштернĕ. 21 çула çитнĕ хĕр нимĕнле ĕçрен те хăраманскер, пĕччен юласран хăраса ӳкнĕ. Çураçма килсен Наçтуçăн ашшĕпе амăшĕ те хирĕçлемен.

Юрать, Иван ĕçсе-çапкаланса çӳрекен çын пулман, ĕçре вăр-варлăхпа палăрнă. Уншăн Наçтуç аппа кăмăллă пулнă. Ялта киле ăсатса яракан яшсем сахал пулман, анчах чун туртаканни, çемье çавăрас шухăшли тупăнман.

Наçтуç Иванпа пĕрлешни пилĕк çул çитсен те çемьере йыш хушăнман. Иван: «Ача пире ура çине тăма чăрмантарать. Пӳрт-çурт лартса, выльăх-чĕрлĕх усраса, çынсем пек хăтлă пурăнма пуçласан та ĕлкĕрĕпĕр», – тенĕ. Иван колхозра лашасем пăхса хăйĕн ĕмĕрне иртternĕ. Ял халăхĕ ăна ĕçне тивĕçлипе пурнăçланăшăн хисепленĕ.

Наçтуç аппа малтан бригадăра ытти çынсемпе пĕрле вăй хучĕ, кайран бригадир пăру пăхма сĕнчĕ. Çапла вара пысăкрах ĕç укçи илме пуçлани выльăх чĕрлĕх усрама тата пӳрт-çурт çĕнетме май пачĕ. Пурнăç малалла шурĕ, çемье те пысăкланчĕ. Çуллахи вăхăтра Ивана йывăр тиврĕ. Талăк лашасемпе уйра пурăнмаллаччĕ. Килте ĕçлеме алли пыраймастчĕ. Çумăрлă çанталăкра тумтир улăштарма та май çукчĕ. Кĕркунне сив çанталăкра çĕр каçма пушшех йывăрччĕ. Çавăнпах пулĕ ӳпке чирĕпе чирлесе кайрĕ. Çултан-çул йывăрлансах пычĕ.

Наçтуç аппан фермăра ĕçсем япăх мар пычĕç. Тăрăшса пăрусене пăхни сая каймарĕ. Ферма ертӳçи Наçтуç аппана пăру пăхакансем хушшинче лайăх кăтартупа пырать тесе ырларĕ.

Иван ывăл ача çуралсан хăйне чи телейлĕ çын тесе шутларĕ. Коля та ашшĕ пекех вăр-вар çитĕнчĕ. Ĕçлеме яланах хатĕрччĕ, кутăнлашса тăман, хушнине яланах пурнăçланă. Анчах пурнăç тикĕс çулпа пымасть çав, мĕн те пулин тупăнсах пырать. Коля 12 çул тултарсан ашшĕ йывăр чирлесе ӳкрĕ, çур çул вырăнпах выртрĕ. Тухтăрсем çине тăрса сыватма пулăшни те усă памарĕ. Иван чире пула вăхăтсăр çĕре кĕчĕ. Наçтуç аппа укçа-тенкĕ шеллемесĕр эмел туянни те пулăшмарĕ. Çапла килти арçын ĕçĕ пĕтĕмпех Коля çине тиенчĕ. Пӳрт-çурт, выльăх-чĕрлĕх патĕнче те пĕтĕм ĕçе вăлах туса пычĕ.



Яндекс.ру сайтран.

Çултан-çул ӳссе, маттурланса, тĕрекленсе каччă пулса тăчĕ. Наçтуç аппа килти хуçалăхра йĕрке тытса пыракан ывăлне Турă панах тесе савăнчĕ. Каçсерен клуба тухса çӳреме те вăхăт тупрĕ Коля. Ял вĕçĕнче пурăнакан Роза ятлă хĕрпе каçсерен тĕл пулма пуçларĕ. Хĕрĕ хитре сăн-пуçлă, тӳрĕ кĕлеткеллĕ, пĕрре пăхсан юратса пăрахмаллаччĕ. Амăшĕ Коля хĕрпе çӳренине кӳршĕри хĕр-упраçран пĕлчĕ. Хĕрĕн ашшĕ-амăшĕ те ялти ятлă-сумлă çынсем. Амăшĕ ял Советĕнче секретарьте ĕçлет, ашшĕ машинăпа трактор паркĕнче слесарьте вăй хурать. Амăшĕ кашни уйăхрах ĕç укçи илнĕрен Роза канфет-пĕремĕкрен татăк тăман. Мĕн çиес килнĕ – çавна çинĕ, мĕн илес тенĕ çавна илнĕ.

Кольăн пурнăç пачах урăхла иртнĕ. Колхоз ĕç укçине те çулталăкра пĕрре çеç панă. Унпа пӳрт-çурт юсамалла е лайăх тумланмалла? Коля укçа-тенкĕ мĕнле килнине лайăх пĕлнĕ.

Пĕр кунхине Наçтуç аппана кумăшĕ пулăшма пыма чĕннĕ. Каçхине çамрăксем вĕсем патне ывăлĕн çуралнă кунне пухăнаççĕ иккен. Пĕччен йышлă çынсем валли апат-çимĕç хатĕрлесе çитерейместрен хăранă. Ывăлĕ Кольăран çулталăк кĕçĕн пулсан та яланах пĕрле çӳреме тăрăшнă: ĕçре те, канура та унран юлман.

Çуралнă куна кайма Кольăна Наçтуç аппа парне вырăнне «Шипр» одеколон туянса пачĕ. Хаклă япала илме укçи çитмерĕ, ку укçа та пасарта çăмарта сутса тунăскер пулчĕ. Наçтуç аппан, темĕн чухлĕ киле васкасан та, çамрăксем пухăниччен тухса кайма май килмерĕ. Ирĕксĕрех, чăрмантарас мар тесе, тĕпел кукăрĕнче ларма тиврĕ.

Çамрăксем кинона пынă пек пурте пĕр вăхăтрах пухăнчĕç те сĕтел хушшине вырнаçрĕç. Ял вĕçĕнче пурăнакан ватă каччă та, вăтăра çывхараканскер, вĕсенчен юлмарĕ. Халап нумай юптарнăшăн е ытти чух кăшт суйнăшăн ăна «Вĕçкĕн Ваççа» тетчĕç. Кунсăр пуçне вăл купăс ăста калатчĕ, итлесе тăранмалла мар. Çак сăлтавпах пулĕ çамрăксем ăна хăйсенчен уйăрасшăнах марччĕ.

Сĕтел хушшине ларнă-ларман Ваççа пĕчĕк халап каласа та пачĕ. «Пĕр каччăна ашшĕ пасарта çĕнĕ ботинка тата алла çыхмалли сехет туянса панă. Каçхине хĕр умĕнче ку япаласемпе мухтанайман. Тем чухлĕ вăхăт иртсен те сехетпе ботинкăна хĕре кăтартма сăлтавĕ тупăнман. Хĕрĕн килĕ умне çитиччен çамрăксене урамра чупса çӳрекен йытă талпăнса вĕрме тытăннă. Йытă çыртмассине кура каччă хĕр умĕнче çапла каланă: «Çĕнĕ ботинкăпа тапсан, çĕнĕ сехет çине пăхатăн та 5 минутран вилсе каятăн».

Малтанах килнисем именинника парне парса чысларĕç, кайран сĕтел ларса апатланнă хыççăн пӳрт чĕтренмелле ташă-юрă пуçланчĕ. Уйрăмăнах Ваççа такмаксем каласа пуçласа ячĕ: «Ир те улма, каç та улма, улма вăя пĕтерет, çак улмаран эрех тусан метр çурă сиктерет». Хĕрсем Ваççаран юлас мар тесе такмак хыççăн такмак шăрантарчĕç. Такмак черечĕ Роза патне çитсен купăса кăшт кăна илтĕнмелле каларĕ Ваççа. Те Розăн такмакне пурте илтчĕр тесе, те кĕввине пĕтерес тесе.

*Лапша, вермишель*
*Çапла пĕçереççĕ.*
*Качча кайсан хунямана*
*Тапса сиктереççĕ, –*

тесе Роза хăйĕн такмакне вĕçлерĕ те хĕрсемпе пĕрле сĕтел хушшине вырнаçрĕ.

Наçтуç аппа çакна илтсен шак хытса ларчĕ, çăварне те уçаймарĕ. Пуçран тукмакпа çапнă пекех туйрĕ хăйне. Ара, Кольăпа çӳрекен хĕр вĕт, пĕрлешсен тем курмалла пулĕ тесе шухăша путрĕ.

Çамрăксем пурте клуба тухса кайрĕç. Наçтуç аппа та киле вĕсем хыççăнах утрĕ. Çав каç куçне çĕрĕпех хупаймарĕ. Роза такмакĕ асран тухмарĕ, Кольăна Розăпа çӳретес мар, ун мăшăрĕ ан пултăр тесе шутларĕ. Кунран-кун амăшĕ ывăлне Роза санпа пĕрле пурăнмалли çын мар, ăна пуян, пурлăхлă çын кирлĕ тесе йăлăхтарчĕ. Амăшне пулах Коля Роза çине урăхларах пăхма пуçларĕ. Каччă шкул пĕтерсен малалла вĕренме шутланăччĕ, анчах укçа-тенкĕ çукки унăн ĕмĕтне татрĕ. Çавăнпа тракториста вĕренме училищĕне заявлени пачĕ кăна, салтака кайма ят тухнă. Наçтуç аппан кулянмалли тупăнчĕ те. Кольăсăр килте халĕ хуçалăх та юхăнĕ. Çапах та хăйĕн хуйхине ывăлĕнчен пытарчĕ: вăрçа каймасть-çке, тепĕр икĕ çултан таврăнать, Турри телей патăр анчах. Хĕсмете Мускава стройбата лекрĕ, метро тумалла пулчĕ.

Коля салтака кайсанах Роза кӳршĕ ял каччипе çӳреме пуçларĕ те çур çултан туй туса пĕрлешрĕç те. Наçтуç аппан чунĕ лăштах пулчĕ. Кольăна та ун пирки савăнсах çырса пĕлтерчĕ. Çапла чун юратнă хĕр хăйĕн пурнăçне урăхла татса пачĕ. Хĕсметрен таврăнсан Коля урăх хĕр-упраçпа çыхăнмарĕ, клуба та хушăран, кино-спектакль вăхăтĕнче анчах, çӳрекелерĕ. Наçтуç аппа каллех хуйха ӳкрĕ. «Мĕн турăм-ши? – тесе шухăшла пуçларĕ. – Ара, Розăпа пĕрлешнĕ-тĕк, ача-пăча та пӳрт тулли, хуçалăхра та тирпей-илем пулнă пулĕччĕ. Анчах иртнине тавăрма çук, çав такмаках Кольăн телейне татрĕ, пĕтĕмпех эпĕ айăплă...»

**Василий ИВАНОВ**

Тимĕрçкасси ялĕ.



### Сирень

Лартрăм пахчана сирень,
Эп шăвартăм ирсерен.
Хамăн пĕчĕк сирене,
Ӳстĕр терĕм кунсерен.
Кашни ир тухмассерен
Вăл пăхать мана куçран.
Тав тăвать вăл халь мана
Хăйне кун-çул панăран.
Сирень халĕ кашни çул
Мухтанать хăй тумĕпе.
Кармашать халь çӳлелле
Кăн-кăвак пĕркенчĕкпе.
Сирень тавра пухăнса
Шав сĕрлеççĕ пыл хуртсем.
Хăйсен ĕçченлĕхĕпе
Савăнтараç хуçине.

### Йăмра

Аслă çулăн хĕррипе
Ӳсет йăмра сарăлса.
Кашни иртен-çӳренпе
Калаçать хăй чĕлхипе.
Çурхи ăшă кун çитсен
Симĕс чаршавне карать.
Мерчен хĕлĕ çитсессĕн
Шурă кĕрĕк тăхăнать.
Вăштăр çилĕ вĕрнипе
Ватă йăмра тайăлса,
Симĕс карттусне хывса
Сывлăх сунать вăл пире.
Çуллахи шăрăх кунта,
Хăй сулхăнне йыхăрать.
Лар-ха, тет вăл, ав, кунта
Савăн манăн сулхăнпа.
Эпир çула тухсассăн
Тураттине хускатать.
Пуçне усса майĕпен
Такăр çулне вăл сунать.

### Ирхине

Хĕвелпе пĕрле тухатăп
Эпĕ хамăр пахчана.
Сывлăш ӳкнĕ сукмакпа
Эп утатăп çырмана.
Çавă тарăн çырмара
Пит илемлĕ пĕве пур.
Ирхи пĕве пăсланать,
Тĕрлĕ пулă вăй вылять.
Ял çине хĕвел сапать
Хăйĕн ăшă шевлине.
Хăвăртрах тăма ыйтать
Лăпкаса вăл кашнине.
Сар автанĕ авăтать,
Шурă хурĕ какалать.
Çапла кунĕ пуçланать,
Халăх ĕçе тытăнать.

### Çуркунне

Çуркунне те çитрĕ
савăк кăмăлпа,
Сар хĕвелĕ пăхрĕ ăшă кулăпа.
Шăнкăрчсем те çитрĕç
аякран вĕçсе,
Юрлама пуçларĕç
хăйсен юррине.
Кураксем те ав мăнаçлăн
Урам тăрăх уткалаççĕ.
Çирĕп йăва çавăрмашкăн
Мăшăрĕсене шыраççĕ.
Юрĕ кайса пĕтĕ,
Çĕр ĕçĕ пуçланĕ.
Трактор шавĕ кĕрлĕ
Таврари уйра.

**Вадим ЧЕКУШКИН.**

**Нина ФАДЕЕВА**, Отиккăвă.

### Чечексем

Чунтанах эп юрататăп
Пӳлĕмри чечексене.
Тусантан шăлсах тăратăп,
Ачашлатăп вĕсене.
Кун сиктерсе шăваратăп,
Эп вĕсемпе калаçатăп,
Ăш кăмăлпа çеç пăхатăп
Капăр тумлă туссене.
Ав пурне те килĕшеççĕ
Эп ӳстернĕ чечексем.
Тĕрлĕ тĕспе çурăлаççĕ,
Пӳлĕме илемлетеççĕ.
Вĕсем мана ăнланаççĕ,
Сывлăша та тасатаççĕ.
Вăй параççĕ-çке пире
Пурăнмашкăн малалла.



Яндекс.ру сайтран.

### Ачалăх

Ирхине ирех тăрсан
Сыраттăм эп çăпата.
Анне çĕленĕ кĕпине
Тăхăнаттăм васкаса.
Ума çакаттăм савăнса
Пиртен çĕленĕ саппунне.
Хулпуççи урлă яраттăм
Шурă пирĕн сумккине.
Чупаттăм эп савăнса
Юлташсемпе шкулалла.
Эпир ӳснĕ вăхăтра
Пĕрмечеллĕ сăхманĕ,
Атте тунă çăпати
Пулнă ялан модăра.
Утаттăмăр Нурăса,
Пилĕк çухрăмри яла.
Ирпе пире ăсататчĕ,
Кайран кĕтсе илетчĕ
«Хурăн тăвайкки» ялан.
Кĕркунне е çуркунне,
Е хĕлле тата,
Çумăр, пылчăк çил-тăман –
Хăратман вĕсем пире.
Тискер вăрçă хыççăнах
Йывăрччĕ ачалăх.
Аса илсен иртнине
Куçăм шывланать ялан.
Çаплах шкула çӳренĕ,
Çăпатапа çул хывнă пуласлăха.

### Савăнса пурăнар

Çамрăклăх çуратать юрату.
Çамрăклах эс паратăн ыйту:
«Чун савни манăн кам-ши»,– тесе.
«Чун савни эс ăçта-ши?»– тесе.
Чăваш ен, Вăрнар ен, Хирлеп ен!
Чечеклен, илемлен, хитрелен!
Çутçанталăкăмăр панă пире
Савăнса пурăнма ĕмĕрне!
Савнипе кашни каç тĕл пулсан
Пурнăç кайĕ ялан пит аван!
Пепкесем, мăнуксем çуралсан,
Туйăмра çут хĕвелĕм ялан!
Чăваш ен, Вăрнар ен, Хирлеп ен,
Вăй-хăватăм ӳсет кунсерен.
Сывлăха упраса пурăнар,
Сар хĕвел çутипе савăнар!

**А.ИЛЛАРИОНОВ**

**! Хисеплĕ вулаканăмăрсем! Проект çĕнĕ авторсене тупса палăртас тĕллевлĕ. Çавăнпа та эсир калав е сăвă çыратăр, тен, сирĕн хатĕр произведенисем пур – кăмăлласах йышăнатпăр. Ачасен, çамрăксен ĕçĕсене уйрăмах кĕтетпĕр. Вĕсене хаваспах хаçат страницисенче пичетлĕпĕр.**